26-мěш çул тухать. Хакě 20 пус.

1943 ИЮНЬ 1 ЫТЛАРИКУН 1?3(6350) №

Пěтěм тěнчери пролетарисем, пěрлешěр!

Чăваш Коммуни

ВКП(б) ОБКОМĚПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĚН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĚН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĚН ХАÇАЧĚ

Сурахи вăхăтěнче пысăк çěс тухăçлăхě тата лайăх махалăх кăтартса ěçлекенсем, ěçсенин депутачěсен райсовет исполкомěсемпе ВКП(б) райкомěсем тăратнă тăрах, ялхуçалăхěнче малта пыракансен республикинри ХИСЕП ХĂМИ çине çаксене кěртнě:

Елчěк районě тăрах:

105. **«Патрюска» колхоз** (председателě Свирцов). Колхоз сурахи ěçě-сене ... 8 кун хушшинче туса ирттернě, оборона фондне валли планран ирттерсе 3 гектар акса хăварнă.

106. **«Марс» колхоз** (председателě А. Г. Газаев). Колхоз сурахи ěçě-сене 9 кун хушшинче вěçленě, оборон а фондне валли планран ирттерсе 10 гектар акса хăварнă. Колхоз сурахи ěçěнче ытти колхозсене те пулăшнă.

Канаш районě тăрах:

107. **Доронин ячěпе тăракан колхоз** (председателě И. К. Кузьмин). Колхоз сурахи ěçěсене 9 кун хушшинче вěçленě, агротехника правилисене лайăх пурнăçа кěртсе пынă. О борона фончě валли планран ирттерсе 10 гектар акса хăварнă.

Сурахи ěçěсенче писсěмен бригадăри плугарьсем **М. Елизарова тата Ф. Игнатьева** юлташсем уйрăмах палăрнă, вěсем нормăна палăртнă 1,2 гектар вырăнне кашни кунах 1,5—1,6 гектар сухаласа пынă. **И. Гордеева М. Захарова** сеяльщицăсем лайăх ěçленě, вěсем нормăна палăртнă 5 гектар вырăнне кашни кунах 6,5 гектар акса пынă.

108. **«Малалла» колхоз** (председателě Н. Кукушкина). Колхоз сурахи ěçěсене 8 кун хушшинче вěçленě. О борона фончě валли планран ирттерсе 5 гектар акса хăварнă.

П. Милюков тата Е. Мутащков плугарьсем нормăна палăртнă 1,2 гектар вырăнне кашни кунах 1,5 гектар сухаласа пынă.

109. **Киров ячěпе тăракан колхоз** (председателě **Никифоров**). Колхоз сурахи ěçěсене 9 кун хушшинче вěçленě, вěсем ěçсене те лайăх пахалăхпа туса пынă. Оборона фончě валли планран ирттерсе 15 гектар акса хăварнă.

110. **«Красное знамя» колхоз** (председателě **А. И. Ильина**). Колхоз сурахи ěçěсене агротехника правилисене çине пăхăнса туса пынă, кěске срокра вěçленě. Оборона фончě валли планран ирттерсе 4 гектар акса хăварнă.

111. **Каганович ячěпе тăракан колхоз** (председателě **Н. И. Иванов**). Колхоз сурахи ěçěсене кěске вăхăтра вěçленě, агротехника правилисене лайăх пăхăнса ěçленě. Оборона фончě валли 20 гектар акса хăварнă.

Колхозри плугарь **М. Сотникова** нормăна палăртнă 1,3 гектар, вырăнне кашни кунах 1,5 гектар сухаласа пынă. Сеяльщик **Т. Тихонов** нормăна палăртнă 5 гектар вырăнне кашни кунах 6 гектар акса пынă.

Çулйěр уйăхлăхне ăнăçлăн ирттерер

Паян республикăра вырăнти çулсене юсаса йěркене кěртмелли уйăхлăх пуçланчě. Темиçе çěршер колхозниксемпе колхозницăсем çулйěр юсас ěçе хутшăнěç. Вěсем кашнинех пана задание пурнăçласси̇шěн тăрăшса ěçлессě.

Пирěн республика çулйěрсене юсавлă тытас тěлěшпе яланах малти ретре тăнă. Çакна республикăри кашни ěçсынни пěлсе тăрать. Анчах тунă ситěнӳсемпе лăплланса ларма юрамасть. Çавăн пек лăплланса ларма пăхни хăшпěр вырăнсенче снсěнет-ха. Иртнě çулсенче тунă çулйěрсем, вěсене сыхласа усраман пирки, япăхма пуçланă. Çуркуннехи тата кěркуннехи йěпе-сапалла çанталăкра е вăйлă çумăр çунă хыççăн çулйěрсем чылай тухне лăсăлса юлаççě.

Паянтан пуçланакан уйăхлăх çинчен ВКП(б) Чăваш Обкомěн бюровěпе ЧАССР Совнаркомě йышăннă хăйсен постановленийěнче уйăхлăха мěнле ирттересси çинчен кăтартса панăччě. Хăшпěр районсем уйăхлăх пуçланиччен ěçлеме тытăнчěç. Шупашкар, Сěнтěрвăрри, Елчěк, Комсомольски районсем Обкомпа Совнарком çирěплетнě графика уйăхлăх пуçланиччен пурнăçлама тытăннă. Елчěкпе Комсомольски районсенче çулйěр ěçěнче ěçлекен колхозниксемпе колхозницăсем кашни куллен графика ытлашшипех тултарса ěçлеççě.

Анчах пěтěмěшле илсен, республикăра çулйěр ěçě лайăх пырать теме çук. Хăшпěр районсем уйăхлăха та кирлě пек хатěрленмерěç. Первомайски, Чкаловски тата Шăмăршă районěсем уйрăмах начар хатěрленчěç. Çулйěр ěçне хутшăнакан ялсоветсемпе колхозсем валли участоксем уйăрса паман. Уйăхлăхра ěçлеме палăртнă ялсоветсемпе колхозсен мěн чухлě ěçлемелине кăтартакан график та çук.

Çавăн пекех Канаш районěнче те ку ěç ситěлěксěр пырать. Райсовет çумěнчи çулйěр пайěн заведующийě Иванов юлташ уйăхлăха мěнле хатěрленни çинчен ыйтсан:—ытти ěçсем нумай пулнă пирки уйăхлăх çинчен шухăшлама та вăхăт пулмарě,—тет вăл.

Паллах, уйăхлăха Иванов юлташ пек ертсе пырсан, вăл лайăххăн иртте... çине шанма йывăр. Райсовет исполком председателěн заместителě Орлов юлташ ку ěçпе хăйне ответлă тесе шутламасть.

Уйăхлăх лайăх иртесси ăна оперативно ертсе пынинчен килет. Чăваш АССР Совнаркомěпе ВКП(б) Обкомěн бюровě ку ěçе ертсе пыма райсовет исполкомěсен председателěсен заместителěсене хушса хăварнă. Çавăнпа та вěсен çак ěçе чăн-чăн большевикла ертсе пымалла. Хăйсем çак ěçшěн ответлă пулнине ăнланса илмелле.

Паян колхозниксемпе колхозницăсем çулйěр ěçне массăллăн тухаççě. Анчах кунта çакă палăрать: хăшпěр участоксенче инвентарьсемпе инструментсем ситěлěксěр. Çулйěр бригадисене организацилес, ěç вăйне тěрěс вырнаçтарса тухас, строительствăри участоксене квалификациллě кадрсемпе çирěплетес ěç çине кирлě пек çавăрăнса пăхман.

Çак кунсенче республика уйхирти ěçсене вěçлет, кашни районăн пěр кунна та çая ямасăр, çулйěр ěçне хастарлăн тытăнмалла. Уйăхлăхра пумалли ěçсене вăраха ямалла мар, уборкăна тухиччен пěтěм çулйěр ěçěсене туса ситермелле.

Пуринчен малтан строительство материалěсем—чул, хăйăр, йывăç хатěрлес ěçе хăвăртлатмалла. Материалсем ситмен пирки ěç чăрăнса тăни ан пултăр. Иртнě çулсенче хăшпěр колхозсем çулйěр ěçěнче ěçлекенсене апат-çимěç вăхăтра пырса паман пирки ěçре чылай чăрмавсем пулкаланă. Кăçалхи çул вăл çитменлěхсем пулмалла мар. Ěçлекенсемпе лашасем валли вăхăтра апат-çим ěç тăратмалла. Унпа пěрлех вěсем апат-çимěçе мěнле расходланине тěрěслемелле. Ялсовет председателěсемпе колхоз председателěсем колхозниксене çулйěр юсама çěре мобилизацилес тěлěшпе ответлă пулаççě. Çулйěр уйăхлăхě вăл — вăрçă вăхăтěнчи ответлă ěç.

Вырăнти мěнпур учрежденисемпе анлăн уса курса, уйăхлăха кăтартуллă ирттерессишěн пěтěм общественносăн тăрăшса ěçлемелле. Колхозниксем хушшинче политикăллă-массăллă ěçе тăтăшах туса пымалла. Вěсене Хěрлě Çарăн мухтавлă боевой ěçěсемпе хавхалантармалла.

Çулйěр ěçěнче социализмлă ăмăртăва анлăн сарса, панă задание ытлашшипех тултарассишěн кěрешме пěлмесěр ěçлер!

Пирěн авиаци Витебск чугунçул узелне тапăнни

Майăн 29-мěшě ырăн тенě чух çěрле пирěн инçене вěçекен авиаци Витебск чугунçул узелне массăллăн вěçсе пырса тапăннă. Чугунçул узелě çине питě нумай бомба пăрахнине пушарсем нумай тухнă тата тăшманăн темиçе эшелонě çěмěрěлнě. Уйрăмах вăйлă пушарсемпе вăйлă взрывсем боеприпассен складěсен тата горючи склачěсен районěнче пулнă.

Пирěн самолетсем пурте хăйсен базисене таврăннă.

Пирěн авиаци Гомель чугунçул узелне тата Карачев станцине тапăнни

Майăн 30-мěшě ыран тенě чух çěрле пирěн инçене вěçекен авиаци Гомель чугунçул узелне тата Карачев станцине тапăннă. Тăшманăн чугунçул эшелонěсем çине тата артиллери склачěсем çине бомбăсем пăрахнă. Бомбăсем пăрахнине пула чугунçул составěсем нумай сунтарса янă тата аркатса пěтернě. Пушарсемпе пěрлех взрывсем пулнă. Пирěн летчиксем Карачев станцинчи артиллери склачěсен территорийěнче уйрăмах вăйлă взрывсем пулнине асăрханă.

Пěр самолетсăр пуçне, пирěн самолетсем пурте боевой заданирен таврăннă.

И. В. СТАЛИН юлташ Англири Рейтер агентствин главнăй корреспонденчěн ыйтăвě çине панă ответ

Англири Рейтер агентствин Мускаври корреспонденчě Кинг господин СССР Халăх Комиссарěсен Совечěн Председателě И. В. Сталин юлташ патне çыру янă, çав çырура вăл Англи общественносне интереслентерекен ыйту çине ответ пама ыйтнă.

И. В. Сталин юлташ Кинг господина çакăн пек çыру çырса ответленě:

„Господин Кинг!

Эсир манран Коммунистла Интернационала салатса янипе сыхăнса тăракан ыйту çине ответ пама ыйтатăр. Сире хамăн ответа яратăп.

ЫЙТУ. „Коминтерна салатса ямалла туни çинчен Британире питě ырласа çырчěç. Çав ыйту çине тата тěнчери сыхăнусен пуласлăхне вăл ыйту епле улшăну кӳресси çине советсем мěнле пăхаççě?“

ОТВЕТ. Коммунистла Интернационала салатса яни тěрěс ěç тата вăхăтра тунă ěç пулса тăрать, мěншěн тесен вăл ирěке юратакан мěнпур нацисем хăйсен пěрлехи тăшманне—гитлеризма пěрлешсе хěсес ěçе организацилессине çăмăллатать.

Коммунистла Интернационала салатса яни тěрěс ěç, мěншěн тесен вăл:

а) „Мускав“ ытти государствăсен пурнăçне хутшăнасшăн, вěсене „большевизмлантарасшăн“ тесе гитлеровецсем суйнине тăрă шыв çине кăларать. Çак суя элек паянтан вара путланса ларать.

б) Тěрлě çěршывсенчи коммунистла партисем хăйсен халăхěсен интересěсемшěн тăрăшмаççě, вěсем ют çěртен хушнипе ěçлеççě, тесе рабочи движенири коммунизма хирěç пыракансем элекленине тăрă шыв çине кăларать. Çак суя элек те паянтан вара путланса ларать.

в) Ирěке юратакан çěршывсенчи патриотсен ěçне çăмăллатать, фашизма хирěç пыракан кěрешěве сарса ямашкăн хăйсен çěршывěсенчи прогрессивнăй вăйěсене, вěсен партийносне тата тěнне-мěнне пăхмасăр, пурне те наци ирěке кăлармалли пěрлěхлě лагере пěрлештерессине çăмăллатать.

г) Мěнпур çěршывсенчи патриотсен ěçне çăмăллатать, гитлеризм пěтěм тěнчере пуç пулса тăрас хăрушлăха хирěç кěрешмешкěн ирěке юратакан мěнпур халăхсене пěтěм тěнчери пěрлěхлě лагере пěрлештерессине çăмăллатать, çапла майпа малашне халăхсем хăйсен пěртанлăхěн никěсě çинче пěр-пěринпе килěштерсе туслăн ěçлессине организацилемешкěн çул уçса парать.

Çаксем ěнтě пурте гитлерла тиранине çěнтерессине пыракан кěрешӳре союзниксен тата ытти пěрлешӳллě нацисен пěрлěхлě фронтне малалла çирěплетме пулашěç тесе шутлатап эпě.

Коммунистла Интернационала салатса яни вăхăтра тунă ěç пулса тăрать тесе шутлатăп эпě, мěншěн тесен шăпах хальхи вăхăтра, фашистла тискер кайăк хăйěн юлашки вăйěсене пухнă вăхăтра, çав тискер кайăка вěлермешкěн тата халăхсене фашистла пусмăрлăхран хăтармашкăн ирěке юратакан çěршывсем пěрле хěсессине организацилемелле.

Сире хисеплесе И. СТАЛИН.

1943-мěш çулхи майăн 28-мěшě“.

Британипе Совет Союз пěрлěхěн наци совечě Совет Союзěпе Англи хушшинче союзлă договор тунăранпа çулталăк çитнě май И. В. СТАЛИН юлташ патне янă саламлă телеграмма

Иосиф Сталина,

Кремль, Мускав.

Британипе Совет Союз пěрлěхěн наци совечě Великобританипе Совет Союзě хушшинче союзлă договор тунăранпа пěр çулталăк çитнě май ăшă салам ярать. Çак икě наци пěрлешсе кěрешни Европăра фашизма часах поражени тӳстерě, пěрлешӳллě нацисемпе пěрле çирěп мир тумашкăн çул уçса парě тесе Совет çирěп шанса тăрать.

Генри ВИЛЬСОН, Челмсфорд епископě, президент.

Унăн Превосходительствине

М. И. Калинин господина,

СССР Верховный Совет Президиумěн Председательне

Мускав

Пирěн икě çěршыв союзлă пуласси çинчен тунă договор çулталăк тултарнă май Эсир салам калаçа янă посланийěн эпě Сире, господин Президент, тав тăватăп. Британин тата союзниксен хěçпăшаллă вăйěсен Çурçěр Африкăри çěнтерěвě пирки Совет халăхě хěпěртесе саламни, пěлтěр халăхсем совет хěçпăшаллă вăйěсен питех те чаплă çитěнěвěсем пирки хěпěртесе саламлине пěр пекех пулни çинчен эпě савăнса пěлтěм. Эпě те, Эсир шанса тăнă пекех, çакна шанса тăратăп: пирěн умри йывăрлăхсем кирек мěнле пулсан та, Великобритания СССР тата Америкăри Пěрлешӳллě Штатсем ытти пěрлешӳллě нацисемпе пěрле, эпир пěрлешсе тăрăшса ěçлени пулăшнипе, тăшмана çěнтерěç, çавăн пекех лата вăрçă хыççăнхи вăхăтра та пěр-пěрнипе таччӑн сыхăнса килěшсе ěçлени (хамăрăн договорта эпир çавна пурнăçа кěртсе пыма сăмах паратпăр) пирěн икě халăхшăн кăна мар, ирěклěхе юратакан ытти мěнпур нацисемшěн те усăллă пулě тесе шанса тăратăп.

VI ГЕОРГ.

ЧĂВАШ АССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕТ ПРЕЗИДИУМĚН УКАЗĚ

Чăваш АССР Шалти Ěçсен Халăх Комиссариачěн Архив отделěн уйрăмах паларнă работникěсене Чăваш АССР Верховный Совет Президиумěн Хисеплě грамотипе наградăласси синчен

Государство архивне организациленни 25 çул тата Чăваш архивне организациленни 20 çул тултарнă ятпа, архив материалěсене пухтарса сыхлас тěлěшпе пысăкăн ěçлененшěн Чăваш АССР Шалти Ěçсен Халăх Комиссариачěн Архив отделěн тата районсенчи архивсен уйрăмах паларнă çак работникěсене Чăваш АССР Верховный Совет Президиумěн Хисеплě грамотипе наградăлас:

1. Мария Николаевна **Гвездиковăна**
2. Терентий Леонтьевич **Майорова**
3. Матрена Ивановна **Миреновăна**
4. Илья Иванович **Музыкантова**
5. Валентин Константинович **Захарова**
6. Родион Семенович **Семенова**
7. Нина Васильевна **Сидоровăна**
8. Иван Васильевич **Сорокина**
9. Ольга Яковлевна **Тавринăна**
10. Антонина Яковлевна **Туришевăна**

Чăваш АССР Верховный Совет Президиумěн Председателěшěн Т. АХАЗОВ.

Чăваш АССР Верховный Совет Президиумěн Секретарěн ěçěсене туса тăраканě А. ИЗМАЙЛОВ.

Шупашкар хули, 1943 çулхи майăн 31-мěшě.

Икшер-виçшер норма тултарса ěçлеççě

ÇĚМĚРЛЕ. («Чăваш Коммуни корр.). Торф кăларакан предприяти коллективě кăçалхи сезона лайăх хатěрленсе кěрсе илнě. Ăна малтанхи уйăхăн ěç итогěсем лайăх çирěплетсе параççě: предприяти апрель уйăхěнчи задание 186 процент тултарнă.

Май уйăхěнче рабочисем тата лимитлěрех ěçлерěç. Вěсем хушшинче двухсотниксен хисепě ӳсет пырать. Резчица пулса ěçлекен Ортикова юлташ малтанхи кунсенчех икшер норма туса пычě, халě виçшер норма тăвать. Унпа пěрле ěçлекен Трифоновăпа Неров юлташсем те кулленхи ěç нормине 2 хут ытла ирттерсе тултараççě, вěсем май уйăхěнчи заданисене 15 кун хушшинчех тултарчěç.

Совет Информаци Бюровěнчен

Майăн 29-мěшěнчи каçхи пěлтерӳ

Майăн 29-мěшěнче Кубань тавралăхěнче Новороссийскран сурçěр-хěвелтухăçнелерехре, çапăçусем пынă. Фронтăн ытти участокěсенче палла улшăнусемех пулман.

Пирěн авиаци Рига залйвěнче нимěçсен 5.000 тонна водоизмещениллě транспортне путарнă.

* * *

Майăн 28-мěшěнче пирěн авиаци чăçěсем фронтăн тěрлě участокěсенче нимěçсен 15 ... войскăсемпе грузсем турттарса пыракан 60 автомашинине пěтерсе тăкнă е сиенленě, боеприпассен 4 складне сирпěнтерсе янă, темиçе чугунçул эшелонне арпатнă, тăшман пехотине пěр батальон таран салатса янă, пěр пайне пěтерсе тăкнă.

* * *

Хěвеланăç фронтěнче пирěн чаçсем тăшман позицийěсем çине персе тăнă. Артиллерипе пехота хěçпăшалěсенчен персе 200 нимěç салтакěне офицерне ытла пěтерсе тăкнă, 5 пулемета çěмěрнě, 4 артиллери батарейине пусарса лартнă. Красноармеецсем Апарин тата Прошетухин юлташсем боевой хурал та тăнă чухне пирěн траншейăсем патнелле пыракан нимěç салтакěсен ушкăнне асăрханă. Пирěн боецсем тăшмана сывăха янă та пулеметсемпе персе 16 гитлеровеца вěлернě. Ытти нимěç салтакěсем вара каялла кайнă.

* * *

Лисичанск районěнче вырăнти çапăçусем пулса пынă. Пěр участокра пирěн боецсем нимěçсен траншейисене тытса илсе вěсенче çирěпленсе ларнă. Тăшман контратакăна тунă, анчах ун çине тěрлě çěртен пулеметсемпе пеме пуçланă, вăл вара пысăк çухатусем тӳссе каялла чакнă. Çапăçу хирěнче тăшманăн 400 вилли таран выртса юлнă.

Пирěн зенитчиксем 3 нимěç самолетне персе ӳкернě.

* * *

Чугуевран сурçěртерехре артиллерипе минометсенчен персе нимěçсен 2 дзотне ишěлтерсе аркатнă, 2 орудине тата грузсем тиенě темиçе лавне пěтерсе тăкнă. Пирěн зенитнăй артиллери тăшманăн 2 бомбардировщикне персе ӳкернě. Пěр самолетăн экипажне тыткăна илнě.

* * *

Дон çинчи Ростовран хěвеланăçнерехре пěр гвардейски чăсăн минометчикěсем нимěçсен артиллери батарейине, ... пěтерсе тăкнă, 4 блиндажне ишěлтернě, ... темиçе вагона çěмěрнě. Пěр чăсăн зенитчикěсем тăшманăн 5 самолетне персе ӳкернě.

* * *

Молотов ячěпе тăракан отрядри партизансен ушкăнě Житомир облаçěнчи пěр шоссе çулě çинче нимěç подразделенийне сасартăк атакăланă. Патриотсем тăшманăн 40 салтакěпе офицерне вěлернě. Украинăри партизансем чугунçул станцине тапăннă; нимěç хуралне вěлерсе пěтерсе, вěсем гитлеровецсем Германие каторгăлла ěçе ирěксěр хăваласа каякан 120 совет гражданне ирěке кăларнă.

* * *

Нимěçсен 208-мěш пехотнăй дивизийěнчи 309-мěш полкăн 3-мěш ротинчен тыткăна лекнě ефрейтор Вильгельм Бурмейстер çапла каласа панă: «Март уйăхěнче Жиздра патěнче пулнă çапăçусенче пирěн дивизие аркатса тăкса пěтěмпех вăйсăрлатрěç. 309-мěш полкра мěнпурě те 200 çын çеç тăрса юлнă, 387-мěшпе 336-мěш полксенче вара 70—90-шар çын çеç тăрса юлнă. Апрель уйăхěнче дивизие çынсем хушса пачěç. Тылран илнě салтаксем çапла калаççě: Германире халě «сӳрӗкле, упаленме пултараканнисене» пурне те çара илеççě, тесçě. Çак вăрçă пуçнăрăнăх салăрăкан салтаксем хěллехи поражениссем хыççăн хăйсен çапăçас хастарлăхне çухатрěç. Вăрçă пуçланнă чухне вěсем нимěç çарě 6—8 эрне хушшинче çěнтерě тесе ěненнě. «Ситсěмле вăрçă», «çиçěмле çěнтерӳ» тенě сăмахсене халь ăнрě каламаççě. Малаш нехи пирки салтаксем пěртте иккěленсе тăмаççě. Германия çěнтересси çинчен халě сăмах та тапратмаççě, çěнтерӳ çинче нумайěшě ăнланмаççě».

Майăн 30-мěшěнчи каçхи пěлтерӳ

Майăн 30-мěшěнче Кубань таврашěче, Новороссийскран çурçěр-хěвелтухăçнерехри районра, çапăçусем пынă. Фронтăн ытти участокěсенче паллă улшăнусемех пулман.

Баренц тинěсěнче пирěн ... тăшманăн танкерне путарнă.

Иртнě эрнере, майăн 23-мěшěнчен пуçласа 29-мěшне çитиччен, сывлăшри çапăçусенче, аэродромсем çинче тата зенитнăй артиллерипе войскăсем пенипе, нимěçсен 456 самолетне пěтерсе тăкнă. Çав вăхăт хушшинче пирěн 118 самолет пěтнě.

* * *

Майăн 29-мěшěнче пирěн авиаци чаçěсем фронтăн тěрлě участокěсенче войскăсемпе грузсем турттарса пыракан 40 нимěç автомашинине пěтерсе тăкнă е сиенленě, боеприпассен 2 складне сирпěнтерсе янă, 10 артиллери батарейине пусарнă, чугунçул составне çěмěрнě, тăшман пехотине икě рота таран сапаласа янă, пěр пайне пěтерсе тăкнă.

* * *

Хěвеланăç фронтěнче пирěн чаçсем 300 нимěç салтакěпе офицерне çити пěтерсе тăкнă. Пěр чăсăн разведка тăвакан отрячě, артиллери пенипе хӳтěленсе, тăшманăн тěрекллетнě пунктне вăркăнса кěрсе кайнă. Урамри çапăçура совет боецěсем 100 гитлеровеца ытла вěлернě, темиçе сынна тыткăна илнě. Хăйсен заданине ăнăçлăн пурнăçласан, разведчиксем хăйсен малтанхи позицийěсем патне таврăннă.

* * *

Лисичанск районěнче вырăнти çапăçусем пулса пынă. Пěр участокра совет боецěсем тăшманăн пěр высота çинчи траншейисемпе дзочěсене тытса илнě. Çав высотăшăн пынă çапăçура 160 нимěç салтакěпе офицерне вěлернě. Çапăçу хирěнче нимěçсен пăрахса хăварнă хěçпăшалěсене нумай пухса илнě, 5 орудие, миномет батарейине тата 26 пулеметне пěтерсе тăкнă. Темиçе çынна тыткăна илнě.

* * *

Дон çинчи Ростовран хěвеланăçнерехре пирěн артиллери 5 дзота, 6 блиндажа тата 2 наблюдательнăй пункта ишěлтернě, боеприпассен складне сирпěнтерсе янă, артиллерипе минометсен 20 батарейине пусарса лартнă.

* * *

Севск районěнче пěр чаçăн артиллеристěсем, тăшманăн обозě çине сасартăк вăйлăн персе илсе, тěрлě грузсем тиенě 42 лава пěтерсе тăкнă.

Пирěн зенитнăй артиллери нимěçсен 4 самолетне персе ӳкернě.

* * *

Смоленск облаçěнчи районсенчен пěринче кěрешекен отрядри партизансен ушкăнě майăн 14-мěшě ыран тенě чух çěрле нимěç гарнизонне тапăннă. Партизансем тăшманăн 35 салтакěпе офицерне вěлернě, казармăна тата хурал çуртне çунтарса янă, 9 автомашинăна пěтерсе тăкнă тата 4 çар складне çунтарса янă. Çав çěрлех партизансен тепěр ушкăнě чугунçул станцине вăркăнса кěнě те, станци хуралне вěлерсе пěтерсе, станцири рельс çулěсене аркатса тăкнă. Тепěр кунне нимěç влаçěсем партизансене тытмашкăн карательнăй экспедици янă. Совет партизанěсем вăрманта карательсемпе çапăçса 47 нимěçе вěлернě, 7-шне тыткăна илнě.

* * *

Нимěçсен 267-мěш пехотнăй дивизийěнчи 487-мěш полкăн 4-мěш ротинчи тыткăна лекнě обер-ефрейтор Карл Бомюллер çапла каласа панă: «Нимěçсемпе итальянецсен войскисем Тунисра поражени тӳсни пирěн полкри салтаксене хытă хуйхăртрě. 6 уйăх хушши пире çапла каласа тăчěç: Роммель каялла чакни вăл пысăк хăйлаллă çар маневрě пулса тăрать, тетчěç. Хаçатсенче çапла çыратчěç: Роммель акăлчансене вěсемпěн хатěрлесе хунă капкăна илěртсе кěртě, тетчěç. Майăн 4-мěшěнче фельдфебель Бич рота командирěпе калаçнă тăрăх çапла каларě: нимěç дивизийěсем Çурçěр Африкăран илхăçан та тухса каяс çук, Туниса тăшман аллине парас çук, терě. Анчах темиçе кун иртсен офицерсен çапла каламалла пулчě: нимěçсемпе итальянецсем Тунисра хирěç тăма пăрахса тыткăна парăннă, терěç вěсем. Çак пěлтерěве эпир пěр чěнмесěр итлерěмěр. Каярахпа салтаксем хăйсем хушшинче хальхи лару-тăру çинчен калаçнă чухне çапла калатчěç: ытти нимěç армийěсене те юлашкинчен çавăн пек кун-çулах кěтет, тетчěç».

* * *

Юлашки вăхăтра нимěç çарěнчен таракан салтаксен хисепě ӳссе пырать. Нумаях пулмасть Запорожье хулинче эсэсовецсем вăйлăн хуралласа пырса 2 пин нимěç таркăнне илсе пынă. Вěсен аллисене тимěр тăлăпа тăлланă. Днепропетровскри çар тěрминче май уйăхěнче тытса хупнă 600 таркăн ытла пурăнать. Сталино хулинче нимěç гарнизонěн начальникě приказ кăларнă, унта вăл нимěçпе румын таркăнěсене пытарса усракан вырăнти çынсене персе вěлерессипе хăратать. Таганрогра хăйсен чаçěсенчен тарнă нимěç салтакěсен хушамачěсемпе вěсен пал ли сене кашни кунах радио тăрăх пěлтереççě.

Государствăн вăрçă заемěн пěрремěш вылявě

Майăн 29-мěшěнче Мускавра Государствăн 1942 çулхи вăрçă заемěн пěрремěш вылявě пулса иртнě.

Вылявра пěтěмпе 1.017.750 выигрыш пулнă, мěн пурě 271.565.200 тенкěлěх.

Ку заемăн çитес вылявě кăçалхи сентябрěн 1-мěшěнче пулать. (ТАСС).

УБОРКĂНА ХАТĔРЛЕНЕÇÇĔ

КАНАШ. (Хамăр корр.). Çĕнĕ Пĕршенерти «Соревнованине» колхоз çуракине вĕçленĕ хыççăнах уборкăна хатĕрлеме тытăнчĕ. Колхозăн 3 жнейка пур, вĕсенчен иккĕшне юсанă. Транспорт инвентарĕсем çителĕклĕ. 110 михĕ, 4 шăнкăлăк хатĕрленĕ, 36 урапа юсанă. Колхоз кăçал тырăсене кĕреплеллĕ çавасемпе вырма хатĕрленет. 30 çавана кĕреплесем çирĕплетсе майлаштарнă, 75 лапатка, 18 çурла çĕнĕрен туяннă.

— Тырпулсене кĕске срокра пухса кĕртни, тырпула тăккалассичен хăтарать. Çавăнпа та эпир уборкăна пĕлсе хатĕрленсе тухас тетпĕр, пĕр тăккаламасăр пухса кĕртме шутлатпăр, — тет колхоз председателĕ Сынуков юлташ.

Колхозниксем хăçал пысăк тимлĕхпе ĕçлеççĕ. Стахановецсен йышĕ ÿссех пырать. Ĕçкунĕсен минимумне тултарассишĕн тата ирттерсе тултарассишĕн кашни колхозникех тăрăшать. Мария Васильева колхозницăн виçĕ ывăлĕ тата упăшки отечественнăй вăрçă фронтĕсенче. Хăй вăл колхозра стахановла ĕçлет. Кăçал 5 уйăх хушшинче 69 ĕçкунĕ тунă вăл.

— Манăн çамрăк ачасем пур. Колхозра ясли пулать, вĕсем мана ĕçлеме чăрмантармĕç — тет Васильева колхозница.

Бригадирсем ĕçкунĕсене ĕçкĕнекисем çине вăхăтра çырса пыраççĕ.

В. ВЕСЕЛОВ.

Фронтпа çĕршыва ытларах сĕт-çу парассишĕн

Чăваш маслопром тресчĕ фронтпа çĕршыва ытларах сĕт-çу парса тăмашкăн хăйĕн ĕçне лайăхлатса пырать. Сталин юлташăн майăн 1-мĕшĕнчи приказĕ пирĕн мĕнпур çынсемпе учрежденисене тылра пĕрпĕринпе килĕштерсе, лайăх сехет механизмĕ пек, тикĕс ĕçлеме хушать. Маслопром тресчĕнче ĕçлекенсем çакна лайăх ăнланса илнĕ, вĕсем пĕр-пĕринпе ăмăртса ĕçлесе, ĕçĕн пахалăхĕпе тухăçлăхне ÿстерсех пыраççĕ. Маслопром тресчĕ апрель уйăхĕнчи производство программине ăнăçлăн вĕçленĕ хыççăн май уйăхĕнче татăклă обязательство илчĕ. Ку уйăхра трест çĕнĕ продукци—типĕ чăкăт кăларма тытăнчĕ. Майăн 10-мĕшĕ тĕлне 41 центнер ытла пысăк пахалăхлă типĕ чăкăт кăларчĕ. Çак çĕнĕ продукци кăларассине вăйлатма планпа 30 сушилка тумалла пулнă пулсан, паянхи куна 34 сушилка туса çитерне. Çапла вара вĕсем правительство заданине ытлашшипех пурнăçланă. Уйрăмăнах Сĕнтĕр районĕнчи Юнгăри, Çĕрпÿри сĕт-çу завочĕсем лайăх ĕçленине палăртмалла. Ассăннă заводсем апрель уйăхĕнчи задание 171 процент пурнăçланă. Май уйăхĕнчи плана та 147 процент ытла тултарчĕç. Юнгăри сĕт-çу енĕпе ĕçлекен мастер Ефименко, Çĕрпÿ заводĕнчи мастер Устиненко юлташсем кунне-çĕрне пĕлмесĕр ĕçлесе, кулленхи нормăна 2—3 хут ытларах тултараççĕ.

Çавăн пекех Ишлей, Етĕрне, Шупашкар районĕсенчи сĕт-çу завочĕсем те кашни уйăхрах производство планне 215 процент тултарса пыраççĕ.

Н. Егорова.

ВЦСПС-па пĕр Наркоматра

ВЦСПС-па пĕр Наркомат, тивĕçлĕ заказсене пурнăçлакан заводсенчи работниксен Пĕтĕм Союзри социализмлă ăмăртăвĕн 1943 çулхи апрельти итогĕсене пăхса тухса, Бунин юлташ директор заместителĕ пулса ĕçлекен завода, вăл апрель уйăхĕнче пĕр наркомата кирлĕ хатĕрсем тăратас енĕпе лайăх ĕçленĕ тесе, уйрăмăнах палăртнă.

* * *

Профсоюзсен Пĕтĕм Союзри Центральный Совечĕ промышленноçăн тивĕçлĕ отраслĕнчи работниксен Пĕтĕм Союзри социализмлă ăмăртăвĕн 1943 çулхи апрельти итогĕсене пăхса тухнă. Ăмăртура Бунин юлташ директор заместителĕ пулса ĕçлекен завода, хăй наркомачĕн системинче иккĕмĕш вырăн йышăннăскере, вăл тепĕр наркомат енĕпе лайăх ĕçленĕ тесе, уйрăмăнах палăртнă.

Хĕрлĕ ялава хамăр алăран ямастпăр

КАНАШ. Апрель уйăхĕнче пирĕн артель производство планне 227 процент тултарса, Чăваш АССР Совнаркомĕн куçса çÿрекен Хĕрлĕ ялавне илме тивĕçлĕ пулчĕ. Ку ĕнтĕ рабочисемпе работницăсен ĕçлес хастарлăхне ÿстерчĕ. Апрель уйăхĕнче артельре 21 стахановецпа ударник пулнă пулсан, халĕ вĕсен йышĕ вăтăртан та иртет. Филиппов, Фадеев, В. Егоров юлташсем кашни куллен задание 200 процент тултарса стахановла ĕçлеççĕ. М. Кузнецов, Павлов токарьсем те вăхăта шута илмесĕр ĕçлесе, ĕç планне куллен 200 процент ытла тултараççĕ.

Эпир май уйăхĕнче плана иртнĕ уйăхринчен 5 процент ÿстертĕмĕр. Хамăра панă Хĕрлĕ ялава хамăр аларах хăварассишĕн пĕтĕм коллектив ырмасăр ĕçлет.

С. КУЗНЕЦОВ,
Сталин ячĕпе тăракан артель председателĕн заместителĕ.

Ăмăртăвăн паха результачĕ

КУСЛАВККА, майăн 31-мĕшĕ. (Телефонпа). Комбинат коллективĕ майăн 30-мĕшĕ тĕлне производство программине 110 процент тултарса, илнĕ обязательствăсене чыслăн пурнăçларĕ. Нефедов юлташ начальник пулса ĕçлекен цехри стахановецсем Кочетков, Швейцброд, Черных юлташсем задание куллен 300—350 процент тултарса ĕçлеççĕ. Лудильщик Мефтахутдинов — цехри парторг—уйăхри ĕç планне 300 процент пурнăçларĕ. Комбинатра нормăна тултарманнисем пĕрре те çук. Ку вăл — социализмлă ăмăртăвăн паха результачĕ.

Комбинат коллективĕ ĕç тухăçлăхне куллен ÿстерсе пырать.

Н. ПЕТРУЧЕНКО,
Партбюро секретарĕ.

Торф кăларас ĕçри çитменлĕхсене пĕтермелле

Пирĕн Чăваш республикинче торф кăларас ĕç темиçе çул каярах çеç пуçланнă. Çак çулсем хушшинче республикăра торф промышленноçĕ палăрмаллах ÿсрĕ. Ку ĕçре пирĕн опыт та пур. 1942 çулхи торф кăлармалли сезон плана ирттерсе тултарма май пуррине уççăн кăтартса пачĕ. Ăна тума машинăсемпе тулли усă курни, рабочисемпе работницăсем хушшинче çирĕп дисциплина пулни кирлĕ.

Çак кунсенче Чăваш АССР Совнаркомĕ торф кăларас ĕç мĕнле пыни çинчен сÿтсе-яврĕ. Совнарком торф кăларакан хăшпĕр предприятисенче торф кăларас ĕç начар пынине палăртрĕ. Атăл лешьенчи предприяти (директорĕ Голубев юлташ) апрелĕн 16-мĕшĕнчен пуçласа майăн 1-мĕшĕ тĕлне 863 тонна çеç торф кăларнă. Çакă ĕнтĕ торф кăлармалли сезона çителĕклĕ таран хатĕрленменнинчен килсе тухнă. Чылай карьерсенче торфа 50 процент кăна кăлараççĕ, сарса хунă торфăн 30 проценчĕ усă курмасăрах юлать. Торф предприятисен руководителĕсем рационализаци ĕçне вăйлатас тата ĕç тухăçлăхне ÿстерес тĕлĕшпе начар ĕçлеççĕ. Рабочисем хушшинче техникăна вĕрентни çук. Социализмлă ăмăрту начар сарăлса пырать. Политикăллă-массăллă ĕç те йĕркеллĕ пулса пымасть. Рабочисен общежитийĕсемпе баракĕсенче пурăнма услови туса паман. Кунти руководительсем пĕлтĕрхи йăнăшсенчен хăйсене кирлĕ пек вывод туман.

Шупашкар, Ишлей, Сĕнтĕрвăрри райсовет исполкомĕсем Атăл лешьенчи торф предприятине ĕçлеме çынсем ямалли плана пурнăçласси çине ответсăррăн пăхнă.

Райсовет исполкомĕсен ку ĕç çине большевикла тимлĕхпе пăхмалла. Предприяти руководителĕсен ĕç тухăçлăхне ÿстерме рабочисене условисем туса памалла. Ĕçре стахановла метод тĕп вырăн йышăнса тăмалла. Рабочисемпе работницăсем хушшинче агитациллĕ-ăнлантарулла ĕçе чĕртсе ярса, вĕсене Хĕрлĕ Çарăн паттăр ĕçĕсемпе хавхалантармалла.

Кашни торф кăларакан предприятин шурлăхсенчи малтанхи ĕçсене вĕçлесе, торф кăларма тытăнмалла, пĕлтĕрхи торфа типĕтмелле. Рабочисем хушшинче производствăна вĕренес ĕçе организацилемелле. Бригадирсемпе пĕр кунхи итогсене сÿтсе-явма куллен кĕске канашлусем ирттермелле. Ĕçĕн результачĕсене кăтарту хăмисем çине çырса пĕлтермелле.

Рабочисемпе работницăсем, инженерла-техникла работниксем хушшинче Пĕтĕм Союзри социализмлă ăмăртăва анлăн сарса ярса, ĕçре çĕнĕ çитĕнÿсем тăвассишĕн вăя шеллемесĕр кĕрешмелле.

ОТЕЧЕСТВЕННĂЙ АСЛĂ ВĂРÇĂ ФРОНЧĔСЕНЧЕ

Укерчĕк çинче: пирĕн земляк гварди подполковникĕ **И. Т. Трофимов.** Нимĕç захватчикĕсене хирĕç пыракан вăрçăра Командованин заданийĕсене кăтартуллăн пурнăçа кĕртнĕшĕн ăна Хĕрлĕ Çăлтăр тата Отечественнăй вăрçăн 2-мĕш степеньлĕ орденĕсемпе наградăланă. Трофимов юлташ вăрçа каиччен Чăваш Наркомземĕнче ĕçленĕ, Элĕк районĕнчи Урмай ялĕнче çуралса ÿснĕ.

В. И. ЧАПАЕВ ОРДИНАРЕЦĔ

ХĔВЕЛАНАÇ ФРОНЧĔ, майăн 24-мĕшĕ. (ТАСС спецкорĕ). В. И. Чапаевăн икĕ ординарец пулнă: пĕри —Петька, ăна пурте «Чапаев» ятлă кинокартинăра тăрăх лайăх пĕлеççĕ, тепри—Борис Шахобуденов. Граждан вăрçи вăхăтĕнче икĕ ординарецĕ те çамрăк пулнă. Вĕсем Чапаев дивизийĕнче мĕн вăрçă пĕтичченех чаплăн çапăçнă.

Хальхи вăхăтра Борис Шахобуденов—боец-минометчик. Миномет расчетĕнче вăл миномет аварлаканни пулса ĕçлет. Чапаевец нимĕçсемпе пĕр хăрамасăр, хаяррăн çапăçать.

Акă нумаях пулмасть тăшман артиллерийĕ вăйлăн персе тăнă чухне пĕр снаряд пирĕн боеприпассем турттарса пынă машинăна лекнĕ. Машинăна пушатакан команда йăлтах стройран тухнă. Машина çинчи минăсем çурăлма тытăннă. Борис Шахобуденов çакна курать те хăйĕн юлташĕсене чĕнсе хăвăртрах машина патне чупса пырать. Çапла вĕсем машина çинчи çар грузне çăлса хăварма ĕлкĕреççĕ. Çак геройла ĕçшĕн Борис Шахобуденова командовани Хĕрлĕ Çăлтăр орденĕ парса наградăланă.

Легендарлă полководец воспитанникĕн Борис Шахобуденовăн В. И. Чапаев панă хаклă ÿкерчĕк пур. Укерчĕк çинче варринче В. И. Чапаев тăрать, унпа юнашар унăн икĕ айккинче чаплă ординарецсем Петькăпа Борис тăраççĕ. Ÿкерчĕк кивелсе кайнă ĕнтĕ, анчах та Борис Шахобуденов уншăн çав тери хаклă ÿкерчĕке яланах хăй çумĕнче тытса усрать.

Ют çĕршывсенче

СОЮЗНИКСЕН АВИАЦИЙĔН ĔÇĔСЕМ

ЛОНДОН, майăн 28-мĕшĕ. (ТАСС). Официальнăй йĕркепе пĕлтернĕ тăрăх, майăн 27-мĕшĕнче бомбардировочнăй авиацин «Москито» йышши самолечĕсен соединенийĕсем Германи территорине нумай шала кĕрсе кайнă. Вĕсем унта Иенăри оптика завочĕсем çине бомбăсем пăрахнă. Бомбăсем пăрахнă чухне самолетсем 70 метртан та аяларахран вĕçсе пынă. Калла-малла шутласан, самолетсем 1.600 километр ытла вĕçнĕ, çав шутран 800 километрне вĕсем Германи территорийĕ çинче вĕçнĕ. Бомбăсем пăрахнипе Цейсс тата Шотт завочĕсем чылаях сиенленнĕ.

Халĕ паллă пулнă тăрăх, союзниксен авиацийĕ Германие майăн 11-мĕшĕнче тапăннă чухне сывлăшри çапăçусенче нимĕçсен 67 самолетне, майăн 21-мĕшĕнче тапăннă чухне—74 самолетне персе ÿкернĕ.

— Вăтаçĕр тинĕс бассейнĕнче Сардинипе Пантеллери утравĕсене атакăланă.

ЛОНДОН, майăн 30-мĕшĕ. (ТАСС). Официальнăй йĕркепе пĕлтернĕ тăрăх, майăн 30-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле Англи бомбардировщикĕсен питех те хăватлă отрячĕсем Вуппертале хаяррăн тапăннă. Çав операцирен хăйсен базисене 33 самолет таврăнман. Вуппертал районĕнче «И. Г. Фарбениндустри» фирмин хими завочĕсем тата Егерăн шарикоподшипник завочĕ пур. Вăйлă пушарсем тухнă тата взрывсем пулнă.

Ĕнер кăнтăрла Америкăн йывăр бомбардировщикĕсем Францири тĕрлĕ объектсене массăллăн атакăланă. Ку таранччен тапăнусенче Америкăн йывăр бомбардировщикĕсен çав тери пысăк соединенийĕсем пулманччĕ-ха. Пуринчен те хаяррăн Реймнри çар сооруженийĕсене, Сен-Назерти тата Ла-Паллисри подводнăй лодкăсен базисене тапăннă. Тăшман авиацийĕ вăйлăн хирĕç тăнă. Сывлăшри çапăçусенче тăшманăн самолечĕсене нумай персе ÿкернĕ.

Акăлчансен çыранри авиацийĕн самолечĕсем юлашки вунă кун хушшинче тăшманăн пиллĕк подводнăй лодкине пĕтернĕ.

Вăтаçĕр тинĕс бассейнĕнче союзниксен самолечĕсем тĕнĕл держависен Сардинири тата Пантеллери утравĕ çинчи базисене пыра-пыра çапнă.

Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Англи бомбардировщикĕсем Эдер тата Менс юханшывĕсем çинчи дамбăсене ишĕлтернипе Рурта мĕнпурĕ 70.000 çын вилнĕ е аманнă.

АНГЛИ АВИАЦИЙĔ ЭССЕНА ТАПĂННИ

ЛОНДОН, майăн 28-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви çапла пĕлтерет: майăн 28-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле Англи авиацийĕ Рура питех те хаяррăн тапăннă. Пуринчен вăйлăн Эссена атакăланă. Бомбардировщиксем хула çине хумăн-хумăн вĕççе пынă. Крупп завочĕсемпе ытти çар обьекчĕсене çак çул хушшинче кун пек вăйлăн тапăнни пулман. Эссен хули халĕ пĕтĕм Германипе чи пысăк сиен курнă хула пулса тăрать. Эссена хÿтĕлесе тăракан сывлăшри оборона хаяррăн хирĕç тăнă. Хăйсен базисене 23 самолет таврăнман.

ПĔРЛЕШÛЛЛĔ НАЦИСЕН ВĂРÇĂ ХЫÇÇĂНХИ ПРОДОВОЛЬСТВИ ЫЙТĂВĔСЕМ ПИРКИ ПЫРАКАН КОНФЕРЕНЦИЙĔ

ХОТ СПРИНГС (Виргини штачĕ), майăн 29-мĕшĕ. (ТАСС). Пĕрлешÿллĕ нацисен вăрçă хыççăнхи продовольстви ыйтăвĕсем пирки пыракан конференцийĕнче США делегацийĕ резолюци сĕннĕ. Резолюцире çапла каланă: конференцин малалли ĕçĕсем ăнăçлăн пулса пыччăр тесен, продовольстви тата ял хуçалăх ыйтăвĕсем тĕлĕшпе пĕрлешÿллĕ нацисен вăхăтлăх комиссине туса хумалла. Резолюцире каланă тăрăх, çав вăхăтлăха уйăрнă комиссин çак ĕçĕсене тумалла: конференцие делегатсем янă çĕршывсен правительствисем продовольстви тата ял хуçалăх ыйтăвĕсене татса пама пĕтĕм халăхсен яланхи аппаратне организацилес тĕлĕшпе конкретнăй план хатĕрлемелле, çавăн пекех тата статистикăпа тĕпчев ыйтăвĕсене малтанлăха тĕпчессине организацилемелле. Резолюцире çакна кăтартса панă: конференцие хутшăннă кашни правительствах çав вăхăтлăх комиссие представитель ямалла. Вăл комиссие июлĕн 15-мĕшĕнчен кая хăвармасăр тумалла, комисси хăш хулара ĕçлесе тăмаллине конференци кăтартса памалла.

Совет делегацийĕ пĕрлешÿллĕ нацисен вăхăтлăх комиссине тăвасси çинчен США делегацийĕ сĕннĕ резолюципе килĕшсе çапла каланă: ку резолюцие тĕпе хурса, ăна конференцин пленарнăй ларăвĕнче сÿтсе-явас, тенĕ.

Американецсен проекчĕ пирки, çавăн пекех тата Китайпа Югослави делегацийĕсен проекчĕсем пирки пулма пултаракан тÿрлетÿсене тата хушса каласисене Совет делегацийĕ вăл проектсене сÿтсе-явнă тата вĕренсе пынă май пама пулнă.

ДЕ ГОЛЛЬ ГЕНЕРАЛ АЛЖИРА ПЫРСА ÇИТНĔ

ЛОНДОН, майăн 30-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Де Голль генерал паян ирхине Алжирти аэродрома пырса çитнĕ. Ăна Жиро генерал кĕтсе илнĕ.

АТТУ УТРАВĔ ÇИНЧЕ ЯПОНИ ВОЙСКИСЕНЕ ПĔТЕРСЕ ТАКНА

ЛОНДОН, майăн 30-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви каланă тăрăх, Атту утравĕ çинче (Алеут утравĕсем) Япони войскисене пĕтерсе тăкни çинчен Вашингтонра официальнăй йĕркепе пĕлтернĕ.

ТОКИО, майăн 30-мĕшĕ. (ТАСС). Домей Цусин агентстви каланă тăрăх, Токиора официальнăй йĕркепе çапла пĕлтернĕ: Атту утравĕ çинче кĕрешекен Япони войскисемпе майăн 29-мĕшĕнчен вара çыхăну пĕтĕмпех татăлнă. Япони гарнизонĕн офицерĕсемпе салтакĕсем пĕтĕмпех пĕтнĕ пуль тесе шутлаççĕ.

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

Чăваш АССР Совнаркомĕ çумĕнчи искусство ĕçĕсен Управленийĕ Государствăн Саратоври Консерваторийĕ çумĕнчи Чăвашсен Опернăй Студине кĕме заявленисем йышăнма пуçлани çинчен пĕлтерет.

Студие 18 çултан пуçласа 30 çула çитнĕ арçынсемпе хĕрарăмсене илеççĕ. Кĕрес текенсен сасси лайăх пулмалла, чăвашла лайăх пĕлмелле, ытти пĕлÿсем 7-мĕш класран вĕренсе тухнинчен кая пулмалла мар.

Кĕме пынисене çак тĕлĕшрен тĕрĕслеççĕ: юрласси, сас мĕнле тухни, хăлха мĕнле илтни, ритмика тата музыкăна мĕнле астуни.

Вĕреньме илнисене стипенди парса тăраççĕ, вĕрентнĕшĕн тÿлемелли укçа на илмеççĕ, общежити пур.

Заявленисене илме пуçланă, вĕсене çак июнь уйăхĕн 20-мĕш числинчен илеççĕ.

Заявленипе пĕрле çакăн пек документсем тăратмалла: 1) çурални çинчен пĕлтерекен свидетельство, 2) вĕреннине ĕнентерекен свидетельство, 3) сывлăх çинчен врач панă справка, 4) хăй алпуснă икĕ фотокарточка, 5) çар службин çинчен калакан документ.

Заявленисене çак адреспа ямалла: Шупашкар хули Герцен урамĕ, 9, Чăвашсен АССР Совнаркомĕ çумĕнчи Искусство ĕçĕсен Управленийĕ.

Тĕрĕслÿсем хăçан пуçланасси çинчен уйрăм пĕлтерÿ пулать.

Шоферсем хатĕрлекен курса вĕренме илеççĕ. Занятисем июнĕн 1-мĕшĕнче пуçланаççĕ. Икĕ уйăх хушши вĕренмелле.

Курса 17 çула çитнĕ́е унтан иртнĕ арçынсемпе хĕрарăмсене илеççĕ (вăл шутра 1926 çулхи июльтен кая мар çуралнисене те).

Вĕренекенсене уйăхне 150 тенкĕ стипенди параççĕ, апат çитереççĕ (ирхине тата кăнтăрла).

Çак адреспа ыйтса пĕлме пулать: Шупашкар хули, Калинин урамĕ, 51, кадрсен пайĕ.

Колхозниксен колхозри ĕçрен хăтарни çинчен алăра справка пулмалла.

2—1.

Чăвашпотребсоюза машинистка, секретарь-машинистка, ялхуçалăх продукчĕсем хатĕрлес тĕлĕшпе, пушномехсырье тата лехтехсырье тĕлĕшпе ĕçлекен товароведсем, пахча-çимĕçе ĕçлесе тумалли технолог кирлĕ.

Ĕçукçи килĕшнĕ тăрăх. Столовăй пур.

Çак адреспа ыйтса пĕлмелле: Чăвашпотребсоюз, Театральная, 1/5. Телефон 2—12.

2—1.

Вырăнти советсен вăрçă кунĕсенчи ĕçĕсем

Çĕршывпа фронт валли пĕр вĕçĕмсĕр хĕçпăшал, çар хатĕрĕсем, тырпул, пахча-çимĕç тата ытти продуктсем парса тăрас тесе, ялсовечĕсем, колхозсем тата мĕнпур ĕççыннисем отечественнăй аслă вăрçă кунĕсенче ывăнма пĕлмесĕр ĕçлеççĕ.

Вăрçă вырăнти советсен организаторла рольне ÿстерчĕ. Депутатсенчен нумайĕшĕ алла хĕçпăшал тытса тăван çĕршыва нимĕçсен фашистла захватчикĕсенчен хÿтĕлеме тухса кайнă. Анчах çакă вăл ялсовечĕсенче ĕçлекенсен речĕсене вăйсăрлатмарĕ, вĕсен ĕçĕн хăвăртлăхне чакармарĕ. Вырăна юлнă депутатсем халичченхинчен ытларах та лайăхрах ĕçлеме тытăнчĕç. Фронта кайнисен вырăнĕсене çĕнĕ кадрсем, пуринчен ытларах хĕрарăмсем йышăнчĕç. Тăван çĕршыв умĕнчи хăйсен патриотла тивĕçне тарăннăн туйса тăрса, вĕсем советсенче тимлĕн ĕçлеме пуçланчĕç.

Вырăнти советсем ĕçне ĕççыннисен анлă массине мирлĕ вăхăтринчен ытларах явăçтарнă. Çавна пула фронта пулăшас тĕлĕшпе тата ĕççыннисен нушисемпе ыйтăвĕсене тивĕçтерес тĕлĕшпе ирттерекен мероприятисем лайăхрах ĕçе кĕме тытăнчĕç.

Ĕççыннисен пултарулăхĕпе тата тавçăрулăхĕпе пĕлсе усă курса, советсем культурăпа çутĕç учрежденийĕсене, кĕперсемпе çулсене юсас тата çĕнĕрен тăвас тĕлĕшпе пысăк ĕçсем туса ирттерчĕç. Вăрнар районĕнчи Кĕçĕн Явăш тата Хапăс ялсовечĕсем бюджетри укçа-тенке расходламасăрах шкул çуртĕсене капитальнăй ремонт тунă. Шупашкар районĕнчи Иккасси ялсовечĕ (ялсовет исполкомĕн председателĕ М. Иванова юлташ) воскресниксем туса шкула юсанă, 12 çăла тасатнă, çулсене юсанă, икĕ кĕпере юсаса йĕркеленĕ. Çамрăксене явăçтарса, ялсовечĕ ялхуçалăх машинисем валли 2.130 тенкĕлĕх запаслă пайсем пухнă. 1942 çулхи кĕркунне пĕр заводри рабочисем валли ялхуçалăх продукчĕсем пухса сутассине организациленĕ. Çапла вара, темиçе кун хушшинчех ялсоветри колхозниксем хăйсен килти запасĕсенчен рабочисене 300 центнер пахча-çимĕç сутнă.

Шупашкар районĕнчи Шĕмшер ялсовечĕ ĕçре лайăх тĕслĕхсем кăтартать. Унăн çур километр тăршшĕ тăсăлса выртакан çул хĕррине йывăçсем лартса тухнă, ял варринче тротуарсем тунă.

Калинино районĕнчи Айкăш ялсовечĕ (исполком председателĕ Ананьев юлташ) колхозниксен вăйĕпе ялсовет территорийĕнчи мĕнпур çулсемпе кĕперсене юсаса тухнă. Ялта икĕ пĕве пĕвеленĕ, вĕсенче халĕ карп тата карас пулăсем ĕрчетеççĕ.

Ĕççынни депутачĕсен Улатăр хула совечĕн исполкомĕ Хĕрлĕ Çар боецĕсем валли парнесем, ăна тумтирсем тата танксемпе самолетсем тума укçа пухас ĕçе ĕççыннисене анлăн явăçтарнă.

Вырăнти советсем çар çыннисен çемьисене пулăшас тĕлĕшпе те пысăк ĕçсем туса ирттереççĕ. Фронтовиксен çемьисене пулăшмалли вунăкунлăх вăхăтĕнче вырăнти советсем çар çыннисен 30.476 çемьине пулăшнă. Вĕсене тырпул, пахча-çимĕç, çĕрулми тата ытти продуктсем пурĕ 34.500 пăт панă. Вăл шутра — 269 килограмм çу, 1.990 килограмм аш-какай. Кунсăр пуçне 33.054 кубометр вутă турттарса килнĕ, 184.000 тенкĕ укçа парса пулăшнă.

[illegible] ĕçлĕн пулăшса тăраççĕ. Калинино райсовечĕн пурĕ 30 депутат пулнă, вăрçа пула халĕ 15-шĕ кăна тăрса юлнă. Райсовет хăйне пулăшма ĕççыннисене практикăллă ĕçе явăçтарнă, вĕсене яланлăх комиссисене суйланă. Яланлăх комиссисем хуçалăх тата культура строительстви тĕп отраслĕсене (ялхуçалăхĕ, бюджет, сутуилÿ, сывлăха сыхлас ĕç, культура тата оборона) ыйтăвĕсене пĕтĕçтерсе тăраççĕ.

Вăрçă вăхăтĕнче яланлăх комиссисен составĕ чылаях пĕчĕкленнĕ, вĕсенче пĕрер е иккĕшер депутат анчах тăрса юлнă. Апла пулин те вĕсем хăйсем таврара нумай йышлă актива пĕтĕçтерсе тăраççĕ. Ялхуçалăх комиссийĕ, сăмахран, 110 активиста пĕрлештерсе тăрать.

Калинино районĕнчи 20 ялсовечĕ çумĕнче яланлăх комиссисем 65 организациленĕ, вĕсенче 102 депутат тата 285 активист ĕçлеççĕ.

Вăрçа пула райсовет исполкомĕн оборона енĕпе ĕçлекен яланлăх комиссин председателĕ Скворцов юлташ пĕччене тăрса юлнă. Анчах вăл çухалса кайман, хăй тавра 85 çынна явăçтарнă, çапла тунипе комиссин ĕçне вăйлатнă. Çавăн пекех Улатăр райсовечĕн оборона комиссийĕ те лайăх ĕçлет.

Ĕççынни депутачĕсем хăйсен суйлав округĕсенче вăрçă хушнă пек ĕçлеççĕ, ялсовечĕсемпе колхозсене партипе правительствăн решенийĕсене вăхăтра пурнăçлама вăйлăн пулăшса тăраççĕ. Акă, Калинино райсовечĕн депутачĕ А. В. Васильева юлташ (вăл учительница ĕçĕнче 36 çул хушши ĕçлет, мухтавлă ĕçшĕн ăна «Знак Почета» орденĕ панă) суйлавçăсем хушшинче массăллă-ăнлантарулла ĕçе куллен туса пырать, вĕсене партипе правительствăн постановленийĕсене пурнăçа кĕртме мобилизацилесе тăрать. Вăл эрнере икĕ хутчен докладсемпе калаçусем туса ирттерет. Докладсем тунипех лăпланса лармасть, тĕрлĕ мероприятисене пурнăçа кĕртессишĕн вĕçне çитичченех кĕрешет.

Кун пек тĕслĕхсем ытти районсенче те пур. Сталин юлташ тăван çĕршывпа фронт валли ытларах та ытларах тырпул, аш-какай, пахча-çимĕç, промышленность валли чĕр тавар туса пама хушнине пурнăçа кĕртес тесе, ялсовечĕсем тата депутатсем колхоз производствин мĕнпур отраслĕсене тимлĕн хутшăнма тăрăшаççĕ, колхозниксемпе колхозницăсене вăрçă кунĕ йывăрлăхĕсене çĕнтерме пулăшаççĕ, уйхир ĕçĕсен пахалăхне, вĕсене вăхăтра пурнăçланине, государство умĕнчи парăмсене вăхăтра татнине тĕрĕслесе тăраççĕ. Вырăнти советсем ертсе пынипе тата вĕсем ĕçлĕн пулăшса тăнипе Чăваш республикинчи колхозсем иртнĕ ялхуçалăх çулне начар мар вĕçлерĕç, государствăн тырпул тухăçлăхне ÿстермелли планне тултарчĕç, государство умĕнчи обязательствăсене вăхăтра пурнăçларĕç. Иртнĕ çул республикăри колхозсем кашни гектартан вăтам шутпа 13,5 центнер тырă туса илнĕ, акмалли çĕрĕн лаптăкне 47 пин гектар чухлĕ анлăлатнă. Чылай колхозсем гектартан çĕршер пăт тырпул пухса илнĕ, выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли плана ăнăçлăн тултарнă. Республикăри колхозсем 1942 çулта майракаллă шултăра выльăхсен хисепне 40 процент, сыснасен хисепне 29 процент, сурăхсемпе качакасен хисепне 74 процент ÿстернĕ. Выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçри çитĕнÿсемшĕн пирĕн орденлă республикăна Оборонăн Государственный Комитечĕ куçса çÿрекен Хĕрлĕ Ялавне тата иккĕмĕш премине панă. Çакă питех те пысăк награда вырăнти советсене тата лайăхрах ĕçлеме хавхалантарать.

Верховный Главнокомандующин Совет Союз Маршалĕн Сталин юлташăн кăçалхи майăн 1-мĕшĕнчи приказĕ совет тылне фронта пулăшас тĕлĕшпе ик-виçĕ хут ытларах вăй хурса ĕçлеме хушать. Аслă çулпуçăн историллĕ приказĕпе хавхаланса, республикăри вырăнти советсем кăçалхи ялхуçалăх ĕçĕсене ăнăçлăн туса ирттерессишĕн çине тăрса кĕрешеççĕ.

Вăрçă йывăрлăхĕсене хăюллăн çĕнтерсе кăçал республикăри колхозсемпе МТС-сем çурхи уйхир ĕçĕсене пĕлтĕрхинчен чылай хăвăртрах туса пычĕç. Çĕршер колхозсем ирхи тырăсене, пăрçа-ясмăксене пĕлтĕрхинчен 10 кун ирттерех акса хăварчĕç. Колхозсенчен нумайĕшĕ планран ирттерсе оборона гектарĕсем тата ирĕке кăларнă районсенчи ĕççыннисене пулăшмалли гектарсем акаççĕ.

Вырăнти советсем умĕнче пысăк та ответлă задачăсем тăраççĕ. Вăйлă тырпулăн никĕсне ăнăçлăн хывнипе пĕр вăхăтрах, калчасене пăхса çитĕнтерес, тырăсене çумкурăксенчен тасатас, уборкăна хатĕрленес тата выльăх-чĕрлĕх фермисене хĕл валли хатĕрлес ĕçсене пуçăнмалла. Çак задачăсене пурнăçа кĕртме ялсовечĕсен ĕççыннисен мĕнпур массине вăйлăн мобилизацилесе пымалла.

М. ПРОХОРОВ.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн—0—67, редакци секретарĕн—4—26, парти пурнăç пайĕн—3—99, промышленноçпа ялхуçалăх пайĕн—5—31, издательство конторин—0—23.

Типографи № 1. Управления полиграф. промышленност. при СНК ЧАССР. Заказ № 2. Ф. 6. 53-84 п.